Октябрĕн 25-мĕшĕччен Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ пырать.
Унта пурте хутшăнăр. Раççейшĕн кашни пĕлтерĕшлĕ!


# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

Вăрнар район хаçачĕ

2010 çул • юпа/октябрь/ уйăхĕн 20-мĕшĕ • юн кун • 125/10286/ № • Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru


ХАКСЕМ

## Сăлтавсăр ӳстернĕшĕн

Кăçалхи çанталăк условийĕсене пула макарон-кĕрпе изделийĕсене тăрук хаклатса яни çинчен хаçатра пĕрре мар çыртăмăр. Уйрăмах иртнĕ уйăхра хура тул кĕрпин хакĕ хытах хăпарса кайнăччĕ.

Вице-премьер–Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн министрĕ Иван Моторин массăллă информаци хатĕрĕсене пĕлтернĕ тăрăх, Монополие хирĕç кĕрешекен федераллă службăн Чăваш енри управленийĕ хальхи вăхăтра хура тул кĕрпин хакне сăлтавсăр ӳстерсе янăшăн курттăмăн кӳрсе килекен хăш-пĕр поставщик тĕлĕшпе Конкуренцие хӳтĕлесси çинчен калакан саккуна пăсни çинчен ĕç пуçарнă. Лару-тăрăва йĕркелес тата шалти рынокра сĕнӳсен ӳсĕмне ӳстерес тĕллевпе Раççей Федерацийĕн хаксене таможньăпа тариф тата тарифсăр йĕркелесе пыракан, тулаш сутуилӳри хӳтĕлев мерисемпе ĕçлекен çумкомиссин йышăнăвĕпе хура тул кĕрпи çине таможня пошлини хурассине вăхăтлăха пăрахăçланă. Хальхи хаксемпе хура тул кĕрпине сахал туяннине кура, çавăн пекех ăна ют çĕршывран кӳрсе килесси ӳснине пула хаксен ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕ çывăх вăхăтра вăрах чакса пырĕ.

## Грипп ересрен

Наци календарĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче 220 пин çынна (мĕн пур халăхăн 17 процентне) грипран вакцинацилемелле. Ку ушкăна кĕрекенсем – ача-пăча садне çӳрекенсем, шкул ачисем, студентсем, медицина, вĕренӳ, транспорт, коммуналлă сфера ĕçченĕсем тата 60 çултан иртнисем.

Хальхи вăхăтра республикăна ачасем валли «Гриппол плюс» вакцина 45936 доза тата çитĕннисем валли «Гриппол» 105000 доза илсе килнĕ. Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне 29181 çынна (2,3 процент) прививка тунă. Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствине ертсе пыракансемпе сотрудникĕсем те грипран вакцинациленнĕ.

Инфекци чирĕ пирки тĕплĕнрех Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин сайтĕнчи «Асăрхăр – грипп ересрен профилактика иртересси» баннера пăхса пĕлме пулать.

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ



Кадрсем пĕтĕм ыйтăва татса парассĕ теççĕ. Пултаруллă специалистсем – хуçалăх тĕрекĕ. Акă «Янгорчино» кооперативри Геннадий Федорович Игнатьев 1973 çултанпа ял хуçалăх отраслĕнче тимлет. Ĕçне пăхса ят-сумĕ. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа тăрăшнăшăн Геннадий Федорович «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

## Выльăхсен шутне чакарасшăн мар

Тип çанталăка пула ял ĕçченĕсем выльăх апачĕ сахалрах хатĕрлерĕç. Мал ĕмĕтлисем ав утă-улăм хаклă пулин те укçи-тенкине шеллемерĕç. Ахăртнех, вĕсем выльăхчĕрлĕх продукцине сутса тупăш илме пулнине тĕпе хучĕç. Сĕт хакĕ кăçал хресчене тивĕçтерет. Уйрăм çынсем продукцие 15 тенкĕпе, ял хуçалăх производство предприятийĕсем 16–17 тенкĕпе сутаççĕ.

Район аграрийĕсенче хальхи вăхăтра 2293 пуç ĕне тытаççĕ. Хушка пуçсен хисепĕ иртнĕ çулхи шайрах. Кашни ĕнерен вăтамран 9,2 килограмм сĕт суса илеççĕ. Чи пысăк кăтарту Карл Маркс ячĕллĕ кооперативăн – кунта кулленхи сăвăм 14 килогрампа танлашать. Ял хуçалăх организацийĕсем продукцие Вăрнарти, Шупашкарти, Çĕмĕрлери сĕт завочĕсене сутаççĕ.

Е.ТОЛСТОВА.

## Çулсем тума, вăрмансене çĕнĕрен чĕртме миллиардсем уйăраççĕ

**Юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе канашлу ирттернĕ. Ăна Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне, 2011 çул валли Чăваш Республикин бюджетне йĕркелессине, ял хуçалăх отраслĕн пĕтĕмлетĕвĕсене, шкул çулне çитменнисен вĕренӳ учрежденийĕсен ыйтăвĕсене тата çулсене аталантармалли тĕллевсене халалланă.**

КАНАШЛУ

Чăваш ен Президенчĕ Министрсен Кабинечĕн членĕсене халăх çыравне активлă хутшăнма чĕнсе каланă, Патшалăх статистика комитечĕн пуçлăхĕ патшалăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ çак акцие мĕнле ирттерни çинчен тунă доклада итленĕ. Эльвира Максимова каланă тăрăх, Чăваш енре пурăнакансен 32 процентне ытла çырава хутшăннă ĕнтĕ. Стационарсенчи 600 ытла çырав участокĕсене уçнă, вĕсем çинчен пĕлтернисене интернетра тата муниципалитет пичетĕнче вырнаçтарнă.

Чăваш Республикин финанс министрĕ Николай Смирнов çитес çуллăх бюджет хатĕрленмелли процесс тата йĕрке çинчен пĕлтернĕ. Бюджетсен хушшинчи трансфертсем çинчен каласа вăлчи малтанах саккун тăрăх пуçламăш цифрăсене палăртнине ăнлантарнă. Ун хыççăн çулталăк тăршшĕнче Раççей Правительствин хăш-пĕр йышăнăвĕпе хушма укçа-тенке валеçеççĕ. Акă 2009 çулта саккунра 6940 млн тенкĕ палăртса хăварнă, 2010 çулта – 5938 млн тенкĕ, 2011 çулта – 6912 млн тенкĕ, анчах та çулталăк тăршшĕнче çак цифрăсем палăрмаллах улшăнаççĕ, ялан тенĕ пекех вĕсене ӳстереççĕ. Çапла вара 2008 çулта бюджетра 12141 млн тенкĕ пăхса хăварнă, 2009 çулта – 14946, 2010 çулта 12241 млн тенкĕ.

Ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов отрасль 9 уйăхра ĕçленин хăш-пĕр пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарнă. Яланхи пек мар шăрăх çанталăк тăнипе ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларассин индексĕ 73,4 процент пулнă. Мĕн пур йывăрлăха пăхмасăрах сĕт тата çăмарта туса илессине иртнĕ çулăн 90 процентĕпе танлашакан шайра тытса тăма май килет. Чăваш Республикин Президенчĕ выльăх йышне чакарнă районсем çинчен пĕлтернине итленĕ, пуçлăхсене лару-тăрăва лайăх енне улăштарма сĕннĕ. Çапла тумасан хуçалăхсен яланхи пек мар шăрăх çанталăк условийĕсенче выльăх йышне сыхласа хăварма бюджетран уйăрнă укçа-тенке каялла тавăрса пама тивĕ.

Чăваш Республикин вĕренӳ министрĕ Галина Чернова шкул çулне çитменнисен вĕренӳ учрежденийĕсенче вырăн çитменнипе çыхăннă ыйтăва татса памалли çул-йĕре палăртса юрăхлă вариантсен шутĕнче 1,5–3 çулсенчи ачасене пăхмалли отпускри амăшĕсене пособи тӳлессине сĕннĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх – ача садĕнче вырăн илме черетре тăракан ашшĕ-амăшне компенсаци тӳлеме çулталăкне 1 млрд тенкĕ ытла кирлĕ пулать, çапах та çакă 3 пин çемьен ача сачĕн ыйтăвне татса пама пулăшать.

Строительство министрĕ Александр Гончаров Раççей транспорт министрĕпе Игорь Левитинпа тĕл пулни çинчен каласа кăтартнă. Ĕçлĕ тĕл пулу вăхăтĕнче Чăваш ене çул-йĕр тума 6 млрд тенкĕ ытла укçа уйăрасси çинчен килĕшсе татăлнă.

Михаил Игнатьев каланă тăрăх – федерацин Вăрман хуçалăх агентствин ертӳçипе Виктор Масляковпа тĕл пулнă хыççăн Чăваш ене пушарсенче пĕтнĕ вăрмансене çĕнĕрен чĕртме тата вăрман хуралĕ йĕркелеме федераци кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрнă.

Министрсен Кабинечĕн членĕсене Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсен тата экологин çĕнĕ министрĕпе паллаштарнă. Çак должноçа 48 çулти Иван Исаева уйăрса партнă.

## «Подписчик кунĕнче» «Çĕнтерӳ çулне» çырăнакансене парнесем кĕтеççĕ

**Эрне кун, октябрĕн 22-мĕшĕнче, «Подписчик кунĕ» пуласси çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ. Çавна май «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцийĕ те хăйĕн тусĕсене парнесемпе хавхалантарма шутларĕ.**

**Октябрĕн 22-мĕшĕнче Вăрнар почтамтне пырса район хаçатне 2011 çулăн пĕрремĕш çур çулĕ валли çырăннисене пурне те «Çĕнтерӳ çулĕнчен» асăнмалăх парнесем кĕтеççĕ. Почтамтра тĕл пуличчен!**

### ÇАНТАЛĂК

| Кĕçнерни кун | Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|---|
| 21.10 | 22.10 | 23.10 |
| +2 | +8 | +4 |
| +2 | +2 | -1 |

*«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.*

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2011 çулăн пĕрремĕш çур çулĕ валли çырăнтарас тапхăр малалла пырать**

2011 çулхи январь–июнь уйăхĕсенче ăна почта урлă илсе тăма унченхи пекех 187 тенкĕ те 80 пус тӳлемелле пулать. Хаçата редакцие килсе илмелле те çырăнтараççĕ, хакĕ – 110 тенкĕ. «Çĕнтерӳ çулне» çырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаçата малашне те тӳлевсĕр илсе тăрĕç.

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсăр ан юлăр. Юратнă хаçата çырăнăр, вулăр.**

